Олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе
для муниципального тура республиканской олимпиады
школьников общеобразовательных организаций
с обучением на чувашском языке
2017-2018 учебный год. 11 класс

Максимальный балл – 50
Время выполнения – 90 минут

1. Çак йĕркесен авторĕ кам? Ятне, ашшĕ ятне, хушаматне (псевдонимĕ пулсан – псевдонимне те) туллин çырăр.

(1)*Чĕлхе – халăх пуянлăхĕ.* (2)*Тăван чĕлхене юратман çын çут тĕнчере çук та пулĕ.* (3)*Тăван чĕлхе – халăх палли, вăл вилĕмсĕррине çирĕплетекен тăмха. (3) Çавăнпа кашни халăх хăй чĕлхине ытарайми юратать, пуринчен те ытла пахаласа хисеплет, куç шăрçи пек сыхлать, чи хаклă пурлăх тесе упрать. (4)Ĕлĕкрен-авалтанпах тĕрлĕ халăхăн чи чаплă паттăрĕсем тăан чĕлхешĕн вутра çунма та, шывра путма та, чĕрĕллех çĕре кĕме те хатĕр пулнă; тĕрлĕ халăхăн ăслă ывăл-хĕрĕсем тăван чĕлхене юрă сăвăсенче юрланă, унран хакли çуккине çирĕплетсе каланă.*

2. *Тăмха* сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарăр, вырăсла куçарăр.

3. *Вилĕмсĕррине* сăмахăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне палăртса тухăр. Сăмах тĕпне кăтартăр.

4. Анаграмма тупсăмне пĕлĕр.

Мана эсĕ тĕл пулатăн
Авалхи халапсенче.
Пĕтĕмпех ылмаштарсассăн
Сас паллисене – куратăн
Пĕвере, кӳлĕсенче.

5. 3-мĕш предложени хутлă е хутсăр пулнине кăтартăр, хăвăр шухăшăра ĕнетерсе парăр.

6. Мĕн вăл сонет? Унăн тытăмне ăнтантарăр.

7. Кам çинчен сăмах пырать-ши?

«… Инçет Пензăран пуçласа мĕн анлă Атăл хĕрне çитичченех кашласа ларакан сĕм-сĕм вăрман таппи татăлнă вырăнта, Чăваш, Тутар, Чĕмпĕр çĕрĕсем чикĕленнĕ тăрăхра сарăлса выртать Виçпӳрт Шăмăршă. Çакăнта, авалхи чăваш ялĕнче, чухăн хресчен кил-йышĕче çуралать те халăх писателĕ пулас çын…»

8. Çавран йĕркине вĕçлĕр. Сăвă виçине палăртăр. Авторĕ кам-ши?

Вăрманăм пачĕ хăй хупне
Хăй сăпкинче мана сикме,
Хирти ыраш хăй сĕткенне
….

9. Тутар Республикин Теччĕ районĕн Кăнна Кушки ялĕнче çуралса ӳснĕ илемлĕ сăмах ăстисене аса илĕр.

10. Савнă çынсене пĕр-пĕринчен уйăрса янин мотивĕ хăш хайлавра тĕл пулмасть?

а) Илпек Микулайĕ. «Хура çăкăр»;
(ă) Турхан Яккăвĕ. «Варуççи»;
(б) Константин Иванов. «Нарспи»;
(в) Петĕр Хусанкай. «Тилли юррисем».